26-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
АВГУСТ
22
ВЫРСАРНИКУН
168(6405) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Нимĕçсен фашистла войскисем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче июлĕн 5-мĕшĕпе августăн 20-мĕшĕ хушшинче тӳснĕ çухатусем

Кăçалхи июлĕн 5-мĕшĕпе августăн 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртнĕ çуллахи çапăçусенче пирĕн войскăсем Совет Союзĕпе Германи фрончĕн мĕнпур участокĕсенче тăшманăнне ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем—4.600, танксем — 6.400, орудисем — 3.800, автомашинăсем — 20.000 ытла.

Тăшманăн 300.000 ытла салтакĕпе офицерĕ вилсе пĕтнĕ. Нимĕçсен фашистла çарĕнче аманнă салтаксемпе офицерсен хисепĕ вилнисен хисепĕнчен сахалтан та иккĕ—иккĕ çурă хут ытларах пулнине шута илсен, нимĕçсен июлĕн 5-мĕшĕпе августăн 20-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче пĕр миллион салтакпа офицертан кая мар пĕтнĕ тесе шутламалла.

Çав вăхăт хушшинчех пирĕн войскăсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксем — 857, тĕрлĕ калибрлă орудисем (вăл шута хăй тĕллĕн куçса çӳрекен орудисем те кĕреççĕ) — 1.274, пулеметсем—3.429, автомашинăсем — 4.230. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 25.600 çынна ТЫТКĂНА ИЛНĔ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем ХАРЬКОВ енче, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сирсе ярса, çаплах малалла тапăнса пынă, уйрăм участоксенче 5 километртан пуçласа 10 километра çити малалла куçнă, халăх пурăнакан 20 пункта ытла, çав шутра ЛЕБЕДИН хулине, йышăнса илнĕ.

БРЯНСК енче тата СПАС-ДЕМЕНСКРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем уйрăм участоксенче тăшманпа çапăçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн çарсем çапăçса разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Августăн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 124 танкне персе çĕмĕрнĕ e пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 118 самолетне персе ӳкернĕ

☆ ☆ ☆

Харьков енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сире-сире ярса, çаплах малалла тапăнса пынă.

Харьковран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем малалла куçнă та халăх пурăнакан 20 пункта ытла, çав шутра Лебедин хулине, йышăнса илнĕ. Нимĕçсем пехотăпа танксен çĕнĕ вăйĕсене илсе пынă та контратакăсем туса пирĕн çарсен наступленине чарса лартма хăтланнă. Танксен питĕ вăйлă çапăçăвĕсем пулса иртнĕ, çав çапăçусенче нимĕçсен 45 танкне персе çĕмĕрнĕ e çунтарса янă. Тăшман пысăк çухатусем тӳснĕ, унăн вара ирĕксĕрех каялла чакмалла пулнă. Совет боецĕсем боеприпассен, горючин, çар пурлăхĕн, продовольствин темиçе складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Харьковран хĕвеланăçнерехре пĕр чаçри боецсем нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 8 тупă, 38 пулемет пĕтерсе тăкнă тата çар пурлăхĕн 7 складне тытса илнĕ.

Харьковран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хаярран хирĕç тăнине çĕнтерсе, çирĕплетнĕ пунктсене чылай йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. 7 тупă, 43 пулемет, вĕсенчен 8-шĕ пысăк калибрлисем, 14 миномет тата боеприпассен икĕ складне тытса илнĕ.

Пирĕн авиаци наступлени тăвакан совет çарĕсене хӳтĕлесе пырать. Тăшмана йывăр çухатусем кӳрет. Пĕр чаçри летчик-истребительсем 5 кун хушшинче нимĕçсен 31 самолетне персе ӳкернĕ. Дудниченко кĕçĕн лейтенант çав хушăра икĕ бомбардировщик тата икĕ истребитель персе ӳкернĕ. Левкович кĕçĕн лейтенант нимĕçсен 3 самолетне пĕтерсе тăкнă. Веселовский кĕçĕн лейтенант ертсе пыракан пирĕн 6 истребитель сывлăшра нимĕçсен 36 бомбардировщикĕпе тĕл пулнă. Пирĕн истребительсем тăшмана атакăланă та нимĕç летчикĕсене каялла таврса янă. Тăшмана хăваласа пырса, пирĕн летчиксем, Веселовский юлташ командир пулса ертсе пынипе, нимĕçсен 7 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Брянск енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă. Тăшман, малтанах хатĕрлесе хунă позицисем пулăшнипе, хаярран хирĕç тăрать. Пĕр соединени чаçĕсем çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче вĕсем нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем тăшман оборонин вăйлă çирĕплетнĕ узелне тытса илнĕ. Нимĕçсем темиçе хут та контратака тунă, анчах вĕсене кашнинчех каялла ывăта-ывăта янă. Çав çапăçусенче 500 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ, 6 хир туппи, хăй тĕллĕн çӳрекен 2 тупă, 7 миномет тата 22 пулемет пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Спас-Деменск хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем Нестеры тата Горки ятлă тĕреклетнĕ пунктсенчи нимĕç гарнизонĕсене çавăрса илнĕ те хаяр çапăçура вĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă, гитлеровецсене 2 батальон ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Тăшман резервсем илсе пынă та темиçе хутчен те контратака тунă. Тăшман контратакисене сирсе ярса, пирĕн боецсем малалла куçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Кун каçичченхи çапăçусенче нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе тăкнă, 5 танк, 13 хир туппи, хăй тĕллĕн çӳрекен 10 тупă, минометсен 9 батарейине тата 58 пулемет пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем кун каçиччен тăшманăн 27 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллеристсем персе нимĕçсен 9 танкне, 36 туппине пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 32 дзочĕпе 26 блиндажне ишсе антарнă. Разведчиксен ушкăнĕ кĕçĕн лейтенант Корпак юлташ ертсе пынипе çĕрле нимĕçсем тăракан вырăна курăнмасăр кĕрсе кайнă. Совет боецĕсем нимĕçсен землянкине сирпĕнтерсе янă, унти гитлеровецсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Нимĕç унтер-офицерне тыткăна илнĕ хыççăн пирĕн разведчиксем хăйсен подразделенине таврăннă.

* * *

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче нимĕçсен 3 тральщикне путарнă. Хура тинĕсре пирĕн флот авиацийĕ тăшманăн хуралта çӳрекен икĕ катерне путарнă.

* * *

Ленинград облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ августăн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле халăх пурăнакан пĕр пунктра тăракан нимĕç гарнизонне тапăннă. Партизансем 28 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне, продовольстви складне тата икĕ гаража сирпĕнтерсе янă. Ленинград облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ тăшман офицерĕсем пурăнакан пӳрте гранатăсем пăрахнă. Пĕр коменданта тата нимĕçсен 8 офицерне вĕлернĕ. Çав отрядри подрывниксен ушкăнĕ нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 12 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Çав крушенире 60 гитлеровец ытла вилнĕ.

* * *

Харьков енче нимĕçсен батальон командирне, капитан чинĕнче тăраканскерне, тыткăна илнĕ. Вăл пичетре хăйĕн хушаматне пĕлтерме каламан. Вăл çапла каласа кăтартнă: «Ман атте—генерал. Вăл малтан нимĕçсен арми корпусĕн командирĕ пулнă, хальхи вăхăтра Германин генеральнăй штабĕнче пысăк вырăнта ĕçлет. Пĕр уйăх каялла эпĕ отпускра пултăм. Эпир аттепе тĕнчери лару-тăру тата вăрçăри лару-тăру çинчен нумай калаçрăмăр. Юлашки ĕçсем мана нимĕç çарĕ поражени тӳсессине татăклă ĕнентерчĕç, терĕ ман атте. Малалла вăл çапла каларĕ: Германи çĕршывĕнчи хальхи лару-тăру нумай енчен 1918-мĕш çулхинчи лару-тăру пекех. Çын резервĕсем пĕтрĕç ĕнтĕ, промышленность производстви каялла чакса пырать. Атте каланă тăрăх, çар руководителĕсем хушшинче Европăра иккĕмĕш фронт уçассинчен халĕ нихăçанхинчен те ытларах хăраççĕ. Гитлер Германие тĕпсĕр шăтăк умне пырса тăратрĕ, эпир татăлса анасси кунсерен çывхарса килет.

Фронта эпĕ чи хаяр çапăçусем пынă вăхăтра çитрĕм. Ман батальон кĕрекен танковăй дивизи çынсем енĕпе те, техника тĕлĕшĕнчен те йывăр çухатусем тӳсрĕ. Ман батальонра 17 кун хушшинче 8 офицер, 31 унтер-офицер тата 376 салтак вилчĕ. Орела, Белгорода тата ытти хуласене те пани пире пурне те хăратса, пăтраштарса ячĕ. Анчах пуринчен те ытларах пире акă мĕн хăратать: вырăссем пиртен çуллахи кунсене туртса илчĕç, эпир çуллахи кунсене нимĕç çарĕн çитĕнĕвĕсен вăхăчĕ тесе шутлама хăнăхнăччĕ».

Тимĕр-тăмăр пухасси—пысăк та ответлă задача

Фронт валли вăрçă техники, хĕçпăшалсем туса кăларасси металлурги промышленноçĕпе тачă çыхăнса тăрать. Тăшмана пысăк çухатусем кӳрекен самолетсене, хăватлă танксене, артиллерие тата ытти нумай тĕрлĕ хĕçпăшалсене тума металл нумай кирлĕ. Металл кăларассине аталантарса пымалли резервсенчен пĕри вăл тимĕр-тăмăр пухасси пулать. Тимĕр-тăмăр промышленноçăн пахата йӳнĕ чĕртавар, кашни тонна тимĕр-тăмăр мартен шăратса кăларнă пĕр тонна металпа танлашать. Çавăнпа та халĕ, отечественнăй аслă вăрçăн фрончĕсенче кунсерен çĕршер тонна металл расходланă вăхăтра, тимĕр-тăмăр пухасси хуçалăхра пысăк задачă пулса тăрать.

Пирĕн çĕршывра тимĕр-тăмăр запасĕ питех те пысăк. Кăштах тишкерсе пăхсан кашни предприятире, МТС-ра, колхозра, промкооперации артелĕнче нумай тимĕр-тăмăр тупма пулать. Юлашки çулсенче тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе рабочисемпе колхозниксем тата совет интеллигенцийĕ сахал мар ĕçлерĕç. Промышленноçа çĕршер тонна тимĕр-тăмăр пухса панă. Пирĕн республика кăçал тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе малтанхи çур çулти плана ăнăçлăн тултарчĕ. Канашри вагонсем юсакан, Улатăрти паровозсем юсакан заводсем лайăх результатсем кăтартаççĕ. Вĕсем плана уйăхран уйăха ирттерсе тултараççĕ. Вăл заводсенче комсомол организацисем тимлĕн ĕçлеççĕ. Вагонсем юсакан заводри комсомолецсем иккĕмĕш кварталта Пĕтĕм Союзри ăмăртура виççĕмĕш вырăн йышăннă, ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотине тата премине илме тивĕçлĕ пулнă.

Партипе Совет тата комсомол организацийĕсем, хуçалăх руководителĕсем пурте тимлĕн ĕçленĕ пулсан, эпир промышленноçа тимĕр-тăмăр татах та ытларах пама пултарнă. Анчах та ку ĕçе пур çĕрте те кирлĕ пек туса пымаççĕ-ха. Вăл тĕлĕшпе промкооперацире начар ĕçлеççĕ, колхозсенче те ĕç япăх пырать. Чăвашсоюзăн районсенчи хатĕрлев конторисем, Шупашкарти конторăсăр пуçне, пĕри те çур çулти плана тултарман. Уйрăмăнах Чкаловски, Вăрнар, Çĕрпӳ, Çĕмĕрле хатĕрлев конторисем кая юлса пыраççĕ. Вăл районсенче тимĕр-тăмăр пухасси государствăшăн питех те кирлĕ ĕç пулнине ăнланса илмен пулас-ха.

Хăшпĕр организацисем пухнă тимĕр-тăмăра çийĕнчех сортласа, тиесе ярас тĕлĕшпе сӳрĕк ĕçлеççĕ. Куславккара, Етĕрнере пухнă тимĕр-тăмăр халĕ те сапаланса выртать. Нумай пулмасть Сĕнтĕрвăррине тимĕр-тăмăр тиеме пĕр баржа панă пулнă. Ăна тиеме ĕç вăйĕ кирлĕ. Ĕç вăйне тупса парас тата баржăна вăхăтра тиеттерес тĕлĕшпе районри организацисем пулăшу паман. Çавăн пирки вара пухнă тимĕр-тăмăр «Кузнец» артельте 8 тонна выртса юлнă.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕ йышăннă тăрăх, виççĕмĕш кварталта тимĕр-тăмăр пухас плана чылай ӳстернĕ. Хуçалăх организацийĕ руководителĕсен задачи—ӳстернĕ плана çак çывăх вăхăтрах тултармалла тăвасси пулать. Мĕншĕн тесен тимĕр-тăмăр пухма çуллахи вăхăтра лайăхрах. Çавăнпа та завод килкартисенче сапаланса выртакан тимĕр-тăмăра, промартельсенче тата колхозсенче юрăхсăра тухнă машинăсене, вак-тĕвек тимĕр-тăмăра халĕ пуçтармалла. Вĕсене пĕр çĕре пухса хунипех ĕç вĕçленмест-ха. Пухнă тимĕр-тăмăра çийĕнчех сортласа тиесе ярассине организацилемелле.

Вăрçă тапхăрĕнче тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе комсомол организацисем пысăк ĕçсем турĕç. Вĕсен халĕ пысăк опыт пур. Çав опытпа усă курса, комсомол организацисен тимĕр-тăмăр пухассине татах та ӳстермелле, çĕршыва ытларах тимĕр-тăмăр парассишĕн кĕрешмелле.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕ тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе çирĕплетнĕ плана пурнăçа кĕртни металлурги промышленноçĕ валли хĕлле тухăçлăн ĕçлеме майсем туса парать. Вăл плана ăнăçлăн тултарар, фронта вăрçă техники тата хĕçпăшалсем ытларах парса тăма пулăшар!

Çĕнĕ вĕренӳ çулне кăтартуллăн хатĕрленер

Партипе правительство вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче те халăха çутта кăларас ĕç çине питех те тимлĕн пăхаççĕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ нумаях пулмасть пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи учительсемпе ытти работниксене ĕçукçи ӳстерсе парасси çинчен постановлени йышăнчĕç. Çакă вăл пирĕн çĕршывра шкула, халăха çутта кăларас ĕçе мĕнле пысăк вырăна хурса хакланине татах та тепĕр хут кăтартса парать.

Халăха çутта кăларас ĕçри работниксен çак кунсенче пулнă канашлăвĕ шкулсен иртнĕ çулхи ĕçĕсем çинчен тĕплĕн сӳтсе явре, çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçри чылай ситменлĕхсене палăртрĕ. Çав питех те кирлĕ ыйтусене сӳтсе явнă çĕре малта пыракан шкулсен руководителĕсем, Чăваш республикинчи паллă учительсем хутшăнчĕç. Канашлу ĕçне çавăн пекех тата республикăри партипе советăн ертсе пыракан работникĕсем—ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ И. М. Чарыков, ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ И. К. Иванов, Совнарком председателĕ А. М. Матвеев, Совнарком председателĕн заместителĕ К. Е. Евлампьев тата ытти юлташсем те хутшăнчĕç. Пирĕн шкулсен ĕçĕн лайăх енĕсемпе ситменлĕхсене палăртса, канашлу республикăри мĕнпур учительсемпе шкул заведующийĕсене тата çутĕç работникĕсене чĕнсе каларĕ. Çав чĕнсе каланинче шкулсен ĕçне, çутĕç учрежденийĕсен ĕçне малалла лайăхлатас тĕлĕшпе практикăллă мероприятисем палăртнă.

Канашлу тĕп задачăсенчен пĕри вырăнне—шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕрентĕве явăçтарас задача лартать. Канашлу мĕнпур учительсене, халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен работниксене вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕле шкул çурчĕсене, учительсем пурăнакан хваттерсемпе интернатсене пĕтĕмĕшпех юсаса çитерме, вĕренекенсене учебниксем çителĕклĕ таран тупса пама, вĕренӳ хатĕрĕсемпе нагляднăй пособисене пурне те хатĕрлесе çитерме чĕнет. Канашлу шкул директорĕсемпе учительсене шкул çумĕнчи участоксем çинчен тырпулсемпе пахча-çимĕçсене пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме, вĕсене лайăх пăхса усрама тата перекетлĕн расходлама чĕнет.

Республикăри канашлу халăха çутта кăларас ĕçре ĕçлекен мĕнпур работниксене фронтовиксен ачисемшĕн, ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă тăлăхсемшĕн уйрăмах тимлĕн тăрăшма кирлине аса илтерет, çав ачасене пурăнма тата вĕренме мĕн кирлине пурне те туса памалла. Çывăх вăхăтсенче районсенче учительсен канашлăвĕсем пулса иртмелле. Парти райкомĕсен секретарĕсен, райисполком председателĕсен тата райçутĕç пайĕсен заведующийĕсен çав канашлусене политика тĕлĕшпе çӳллĕ виçере туса ирттерме тăрăшмалла. Çав канашлусенче шкулсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене большевикла палăртмалла, вĕсене пĕтермелли практикăллă ĕçсем палăртса хумалла. Шкулсенче вĕренӳ пуçланаччен шутлă кунсем кăна юлчĕç. Вĕренӳ çулне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек организованно кĕтсе илес тесен, хамăрăн мĕнпур вăйсене мобилизацилемелле

„Эпир хамăрăн ялавсене çапăçу вут-çулăмĕ витĕр чыслăн илсе тухатпăр"

Республика шефа илнĕ чаçран янă çыру

Пирĕн республика шефа илнĕ чаçран ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Андреева, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташсен ячĕпе çыру килнĕ. Н-ски чаçри боецсемпе офицерсен ячĕпе часть командирĕ Седулин, политотдел начальникĕ Бахтин юлташсем çапла çыраççĕ:

Хаклă юлташсем!

Боецсемпе командирсен тата политработниксен ячĕпе хамăрăн шефа—орденлă Чăваш республикин халăхне боевой салам яратпăр.

Иртнĕ çулхи сентябрь уйăхĕнче, пирĕн часть пулса кайнăранпа çулталăк тултарă кун, пирĕн фронтовиксен делегацийĕ Сирĕн патра хăнара пулчĕ. Делегаци Шупашкар хулинчи нумай предприятисенче, Канашри вагонсем юсакан заводра, республикăри чылай колхозсенче пулса курчĕ. Пирĕн воинсем Сире: — Пирĕн часть хăйĕн çапăçури ялавĕсене намăса кăлармĕ, гитлерла вăрă-хурахсене çĕнтерессишĕн пирĕн кашни боецпа командир хăйĕн мĕнпур юнне пама хатĕр тăрать, тесе шантарса каларĕç.

Фронтовиксем хăйсен сăмахне тӳрре кăларчĕç. Нумаях пулмасть пирĕн чаçа нимĕç оборонине татса кĕрсе, тăшмана Хĕвеланăçнелле сирсе ыватма, совет ялĕсене нимĕç фашисчĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларма приказ панăччĕ. Çав сехете эпир нумайранпа кĕтсе тăнă. Совет воинĕсен çапăçури хастарлăхĕ çав тери пысăк пулчĕ.

Ирхине ирех пирĕн часть тăшманăн укреплениийĕсене паттăррăн штурмлама пуçларĕ. Нимĕçсем артиллерипе минометсенчен, пăшалсемпе пулеметсенчен вăйлăн пеме тытăнчĕç. Анчах совет богатырĕсене нимĕн те чарса тăма пултараймарĕ. Юханшыв урлă каçса, боецсем йĕплĕ пралук картисем патне тата минăсем лартса тухнă вырăнсем патне шăвăнса пычĕç те вĕсенче çулсем уçса, атакăна ыткăнчĕç. Штыксемпе гранатăсем ĕçе кайрĕç.

Малта пыракан боецсем уçнă çулпа пирĕн ытти подразделенисем кĕрсе кайрĕç. Тăшман шикленсе ӳксе, каялла тапма тытăнчĕ. Эпир пырса тапăнни фрицсемшĕн пачах та кĕтмен çĕртен пулчĕ. Çав каппайчăк вояксем, хăйсен мĕнпур япалисене пăрахса, траншейăсенчен туха-туха тарчĕç. Кайран, сывлăш çавăрсан, вĕсем темиçе хутчен те контратака туса пăхрĕç. Анчах нимĕçсен урăх çĕртен пырса çитнĕ çĕнĕ батальонĕсем те, тăшманăн танкĕсем те пирĕн паттăр боецсене чарса лартма пултараймарĕç.

Çапăçусенче эпир нимĕçсен 94 салтакĕпе офицерне тыткăна илтĕмĕр, 2100 фрица вĕлерсе пĕтертĕмĕр. Тăшманăнне 35 пулемет, 6 танк, 29 тупă тата минометсем чылай пĕтерсе тăкрăмăр. Çакăн пек трофейăсем: тĕрлĕ çар пурлăхĕсен 8 складне, 39 пулемет, 126 пин патрон, снарядсемпе мотоциклсем, велосипедсем тата ытти япаласем нумай тытса илтĕмĕр.

Пирĕн воинсем халăх пурăнакан 7 пункта тăшманран ирĕке кăларчĕç, 22 километр малалла куçрĕç.

Çав çапăçусенче совет çыннисем пысăк геройлăхпа паттăрлăх, çулăмлă патриотизм тĕслĕхĕсене кăтартса пачĕç. Çапăçу хирĕнче ӳкнĕ воин вырăнне çĕнĕ воин йышăнчĕ, аманни стройран тухмасăр тăшмана малалла çунтарса пычĕ. 6 бронебойщик тăшманăн 4 танкне хирĕç çапăçрĕ. Боецсем нимĕçсен пур машинисене те персе çĕмĕрчĕç. Жаворонков боец пĕр çуртран персе ларнă. Çурт çунма тытăннă. Совет воинĕ тĕтĕмпе пăчăхма пуçланă, анчах танксене хирĕç пемелли пăшалран пĕр чарăнмасăр пенĕ. Герой пĕтнĕ, анчах вăл хăй пĕтиччен тăшманăн танкне те пĕтерсе тăкнă.

Çапăçу вăхăтĕнче Храпов пулеметчик пĕччен тăрса юлнă, унăн юлташĕпе расчет командирĕ стройран тухнă. Паттăр воин пулемет лентисем хунă икĕ ещĕке урисем çумне çыхса лартнă та хăйĕн шанчăклă «Максимне» сĕтĕрсе малалла шунă. Вăл каялла мар, малаллах кайнă. Унăн çулĕ хĕвеланăçнелле пулнă. Санитарсем ун патне темиçе хутчен те шăвăнса пырса, ăна медицина пунктне кайма сĕннĕ. Анчах паттăр воин çапăçу хирĕнчен тухман, вăл тăшмана çаплах çулнă.

Кун пек примерсем татах та нумай. Çĕршер боецсемпе командирсене Совет Союзĕн орденĕсемпе награтларĕç.

Çав çапăçусенче чăваш халăхĕн ывăлĕсем те хăйсен паттăрлăхне кăтартрĕç. Кувакино райсоветĕн депутачĕ Тоншев юлташ унчченхи çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн Хĕрлĕ Ялав орденĕ илнĕччĕ. Тоншев капитан хальхи çапăçусенче те хастаррăн çапăçрĕ, вăл 3 гитлеровеца хăй аллипе тыткăна илчĕ. Ăна Отечественнăй вăрçăн иккĕмĕш степенлĕ орденĕпе награтларĕç.

Çапăçусенче чăваш хĕрĕсем хăйсене паттăррăн тытрĕç. Кĕçĕн сержант Зоя Бранькова (Шупашкар районĕнчи «Çĕнĕ ял» колхозран), боец Рая Карпова (Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Большевик» колхозран), тăшман артиллерипе минометсенчен персе тăнине пăхмасăрах, пăсăлнă телефон линине темиçе хутчен те тӳрлетрĕç. Хастар телефонисткăсене медальсемпе награтларĕç.

Хаклă юлташсем!

Боецсемпе командирсем тăшмана малашне те пĕр хĕрхенмесĕр çунтарса пырăпăр тесе сире каласа пама ыйтаççĕ. Пирĕн умра çапăçусем сахал мар пулĕç. Эпир хамăрăн ялавсене çапăçу вут-çулăмĕ витĕр чыслăн илсе тухăпăр.

Çĕнтерӳ кунĕ çывхарса килет. Анчах вăл хăй тĕллĕн килес çук. Ăна хаяр çапăçусенче çĕнтерсе илмелле. Тăшман аманнă, анчах вăл вăйлă-ха, вăл çĕнĕ авантюрăсем тума та пăхĕ.

Хĕрлĕ Çар кăçалхи çулла тăшмана Курскпа Орел патĕнче аркатмаллах пыра-пыра çапрĕ. Хĕрлĕ Çар гитлерла вăрă-хурахсене татах та хăватлăнрах пыра-пыра çапĕ, тет пирĕн Верховный Главнокомандующий Сталин юлташ. Вăл çавăн пекех пулать те. Эпир, совет воинĕсем, татăклă çапăçăва хатĕр.

Чăваш республикинчи рабочисемпе колхозниксем, совет интеллигенцийĕ! Эпир Сире татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕнетпĕр. Фронта тупăсемпе танксем, самолетсем, снарядсем, апат-çимĕçсем ытларах хатĕрлесе парăр! Эсир паха ĕç тăватăр. Эсир хăвăрăн ĕçĕрпе хамăрăн Тăван çĕршыва ылханлă тăшманран ирĕке кăларма пулăшатăр. Эсир—тылра, эпир—фронтра пĕтĕм вăя хурса кĕрешсе çĕнтерӳ сехетне, эпир пурте килте тĕл пулас сехете çывхартăпăр.

Сывă пултăр пирĕн аслă полководец тата çулпуç Сталин юлташ!

Ирсĕр тăшмана çапса аркатма—малалла!

Н-ски чаçăн командирĕ полковник СЕДУЛИН,
Политотдел начальникĕ подполковник БАХТИН.

Чăваш халăхĕн çырăвĕ çине ответлетпĕр

Эпир, Н-ски чаçри чăваш боецĕсемпе офицерĕсем, «Чăваш халăхĕ хăйĕн фронтри ывăлĕсем патне янă çырăва» илсе вуланă хыççăн мĕнпур чăваш халăхне чĕререн шантарса çапла ответлетпĕр.

Орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисем фронтпа çĕршывшăн ывăнма пĕлмесĕр ĕçленишĕн эпир чунтан савăнатпăр. Эсир пысăк çитĕнӳсем тунипе пире ирсĕр тăшманпа кĕрешнĕ çĕрте калама çук вăйлăн хавхалантаратăр. Республикăри колхозсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура вырăнлăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе мала тухса, республика Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш премине илме тивĕçлĕ пулни пирĕншĕн те пысăк савăнăç пулса тăчĕ. Эсир вĕри тăр юхтарса ĕçлени çине ответлесе, эпир пĕр пульăпа снаряда та, пĕр минăна та нимĕçе тивертмесĕр сывлăшра ахаль персе ямастпăр. Эпир юнлă тăшмана тата хытăрах аркатма сăмах паратпăр. Совет Союзĕн Геройĕ Федот Орлов, пулеметчик Смирнов, чаплă снайпер Родион Давыдов юлташсем нимĕçсене мĕнле çапса аркатнă, эпир те вĕсем пекех çапăçма пулатпăр.

Чăваш халăхĕн чĕрене хускатакан çырăвĕ пирĕн çапăçас хастарлăха татах та ӳстерчĕ. Эпир—артиллеристсем, минометчиксем, связистсем—çак вăрçăн юлашки тапхăрĕнче хамăрăн пĕтĕм паттăр вăя кăтартатпăр тесе мĕнпур чăваш ĕççыннисене шантаратпăр. Эпир хамăра шанса панă вăрçă хатĕрĕн техникине тĕплĕн вĕренсе, тăшмана пур майсемпе те пĕтерсе пырăпăр. Тăшманăн пĕтес вăхăчĕ инçе юлмарĕ.

Нимĕç оккупанчĕсене вилĕм!

Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуç, Верховный Главнокомандующий Сталин юлташ!

Н-ски чаçри чăваш боецĕсем хушнипе кĕçĕн сержант ПАВЛОВ.

Боецсенчен 17 çын алă пуснă.

Государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçланă

ВАРМАР. Кĕтеснерти «XVIII сьезд партии» колхоз государствăна хăяр парса татрĕ, 32 центнер ир пулакан купăста пачĕ.

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз 1943 çулшăн государствăна брынза, çу, çăм, ашкакай, çăмарта памалли плана çĕр процентпех тултарчĕ. Халĕ 1944 çулшăн пама тытăнчĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем! Уборкăра фронтри пек ĕçлĕр, тырпула хăвăртрах пухса кĕртсе, государство умĕнчи парăмсене срокчен татăр!

Вăрнарсен паха пуçарăвне йышăнса

ВАРМАР, августăн 21-мĕшĕ. (Хамăр корр.). «Красная Кубня» колхоз августăн 16-мĕшĕнче çурхи тырăсене пĕтĕмпех вырса пĕтерчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Вăрнар районĕнчи колхозниксен чĕнĕвĕ çине хĕрсе ĕçлесе ответлеççĕ. Государствăна тырă памалли обязательствăсене вĕсем сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне парса татасшăн, августăн 22—23-мĕшĕ тĕлне кĕрхине туса пĕтересшĕн, октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерсе уйхирти ĕçсене пĕтĕмпех хушшинче вĕçлесшĕн кĕрешеççĕ.

Колхозниксем пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçлени августăн 15-мĕшĕнче тырă вырас ĕçре питĕ лайăх курăнчĕ. Çак кун колхозри ĕçлекенсем ĕç нормине икшер хут тултарчĕç. А. Пашкова колхозница çурлапа 0,28 гектар тырă вырнă, машиновед Степанова, Павлов юлташ жнейкăсемпе 7-шер гектар вырнă. Т. Никифорова, Е. Андреева колхозницăсем 750-шер кĕлте çыхнă. Пĕтĕм халăх пĕр çын пек тăрăшса ĕçленипе колхоз çак кун 39 гектар тырă вырнă. Çапла тырăсене вырса пухас ĕçе плана пăхнинчен колхоз икĕ кун маларах вĕçлерĕ. Тырăсен 85 процентне машинăсемпе тата кĕреплеллĕ çавасемпе те анлăн усă курнă.

Халĕ ку колхоз хĕрсех авăн çапать, государствăна тырă парать. Енер кĕрхи тырăсене капана хыва пĕтереççĕ. Государствăна тырă памалли обязательствине 74 процент пурнăçланă. Паян та Заготзерно пунктне 12 лава тырă ăсатрĕç.

Пĕтĕм вăя—уборка ĕçсене хăвăртрах вĕçлеме

ЕЛЧĔК, августăн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Уборкăн малтанхи кунĕсенче тырпулсене пухса кĕртес ĕçре районăн колхозĕсем тырпулсене вырас ĕçре малтан машинăсемпе тулли усă курни пулнĕ. Анчах эпир тырра кĕреплеллĕ çавасемпе вырассине йĕркелесе ярайманрăмăр. Çавна пула ĕçĕн хăвăртлăхĕ ытти районсенчи пек вăйлăн ӳссе пыраймарĕ.

Çак йăнăша халĕ пирĕн район тӳрлетсе пырать. ВКП(б) Чăваш Обкомĕн тата Совнаркомĕн кăтартăвне колхоз председателĕсем шута илчĕç. Тырра жнейкăсемпе вырнисĕр пуçне тата кĕреплеллĕ çавасемпе те хăвăрт çулса пухма пуçларĕç.

Августăн 19-мĕшĕнче районри колхозсенче 864 çын тырра кĕреплеллĕ çавасемпе çулчĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхозра кĕреплеллĕ çавасемпе 66 колхозник çулаççĕ. Вĕсем августăн 19-мĕшĕнче 23 гектар тырă çулса пуçтарнă. «Смычка» колхозра Е. Максимов, В. Семенов колхозниксем кĕреплеллĕ çавасемпе кунне çуршар гектар тырă çулса пухнă.

Çавăн пекех кĕлтесене капана хывас ĕçе нумай колхозсем çĕрле тума пуçларĕç. Пушкин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем августăн 19-мĕшĕнче 80 урапа кĕлтене капана хыврĕç.

Районри колхозсенче кĕлте турттарас ĕçре халĕ 129 вăкărпа усă кураççĕ.

С. МАКАРОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Малти ретре

Верховнăй Главнокомандующи Сталин юлташ Орелпа Белгород хулисене ирĕке кăларнă ятпа войскăсене панă приказ колхозниксене ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарчĕ. Тăрăнти «Красный партизан» колхоз колхозникĕсем фронта çĕнĕ çитĕнӳсемпе хавхалансах, кĕрхи тырăсене 5 кун хушшинче, çурхи тырăсене 7 кун хушшинче вырса пухрĕç.

Машиновед Мирон Андреев жнейкăна талăкра 20 сехетрен кая мар ĕçлеттерчĕ, кунне 8—9 гектар тырă вырчĕ. 11 талăк хушшинче вăл жнейкăпа тырă вырса 78 ĕçкунĕ ĕçлесе турĕ. Е. Григорьева, М. Филиппова, Е. Ефимова колхозницăсем кулленех 650—710-шар кĕлте çыхрĕç. Алăпа выракансем И. Ильина, Е. Иванова юлташсем талăкра 0,16—0,18 гектар тырă вырчĕç. 65 çулхи Варвара Романова çамрăксенчен юлмасть. Вăл хăш кунсенче 0,22 гектар тырă вырчĕ.

Стахановецсен шучĕ кунран кун ӳссе пырать. 79 çулхи И. Федоров мучин çӳçĕсемпе сухалĕсем кăвакарса ĕнтĕ. Анчах вăл иртнĕ çулта 263 ĕçкунĕ тунă. Кăçал 250 ĕçкунĕ тунă ĕнтĕ. Вăл пĕр ĕçрен те юлмасть: кĕлте кӳрет, тырă леçме каять, колхозăн транспорт инвентарĕсене юсать, тырă вырать. Уйрăм кунсенче вăл алăпа 0,13 гектар тырă вырчĕ.

Колхозăн чи лайăх ĕçлекен членĕ—стахановка Мария Филиппова—кăçал уйхир ĕçĕнче 597 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă та ĕнтĕ. М. Филиппова юлташ Сталин юлташăн приказне ăнлантарса панă хыççăн кăçал ялхуçалăх çулĕ вĕçĕччен тата 203 ĕçкунĕ тума сăмах пачĕ. Çапла вăл кăçал 800 ĕçкунĕ ĕçлесе тума шутлать.

Ватăсемпе пĕрле ĕçре çамрăксем те хастар тăрăшаççĕ. 12 çулхи Нина Иванова кăçал 49 ĕçкунĕ, 13 çулхи В. Алексеев 84 ĕçкунĕ тунă.

Шкулта вĕренекен ачасем тимлесех пучах пухрĕç. Учительница Имендаева юлташ ертсе пынипе вĕсем колхоза 9 центнер пучах пухса пачĕç.

Колхоз кĕрхи тырăсене акма августăн 10-мĕшĕнче тухрĕ. Тырă акнă чух С. Андреева сеялкăпа малтанхи кунах 9 гектар тырă акрĕ. Иккĕмĕш кун вăл, ĕçе тата иртерех тухса, кăçнечен 10 гектар тырă акрĕ. Çапла тăрăшса ĕçленипе колхоз августăн 18-мĕшĕнче кĕрхи тырра 70 гектар акса, плана пĕтĕмпех пурнăçларĕ.

Колхозра ĕçе лайăх шута илсе пыраççĕ. Стахановецсен ĕçне кунта пысăк хак параççĕ. Вĕсен ĕçĕ кăтарту хăми çинче курăнса тăрать. Стахановецсен ĕçне стена хаçачĕсем те кăтартса ăнлантараççĕ. Тырă вырнă вăхăтра стена хаçачĕсем бригадăсенче 8 номер, колхозра 4 номер тухнă. Колхозниксем хушшинче стена хаçат редакторĕн Т. Григорьев юлташăн авторитечĕ пысăк.

«Красный партизан» колхоз халĕ кĕрхипе çурхи тырăсене уйхиртен итем çине кĕртрĕ, капана хыврĕ. Государствăна тырă памалли обязательствăна августăн 19-мĕшĕнче пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕ.

Халь колхозниксем хĕрсех авăн çапаççĕ. 67 гектар çинчи тырра çапса тасатнă та ĕнтĕ. Тепĕр виçĕ кунтан вĕсем кĕрхи тырăсене те çапса пĕтереççĕ. Тырă вырнă вăхăтри пекех, колхозра столовăй аван ĕçлет. Калас пулать «Красный партизан» колхоз (председателĕ коммунист И. Васильев) кăçал выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та ирттерсе пурнăçланă.

В. ВЕСЕЛОВ.
Шăхасан районĕ («Чăваш Коммуни» корр.).

Ĕç нумай хăвăртланчĕ

СЕНТЕР, августăн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрнарсен чĕнĕвĕ чылай колхозсенче уборка ĕçĕсене нумай вăйлатрĕ. «КИМ» колхоз членĕсем, Вăрнар районĕнчи колхозниксен чĕнĕвне сӳтсе-явса конкретнăй обязательствăсем илчĕç. Тырăсене уйхиртен пухса кĕртсе капана хывас ĕçе сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме, августăн 25-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татма пулчĕç.

Уйхирте те, итемсем çинче те колхозниксем халĕ кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. Кĕрхи тырăсене пĕр тăккаламасăр вырса пĕтерсе капана хывса лартнă ĕнтĕ, çавăн пекех халĕ урпа, тулă вырса пĕтернĕ, пăрçа йышши культурăсене пурне те çапса пуçтарнă. Вырмалли сĕлĕ çеç юлнă.

Валерьян тата Ферапонт Черновсем жнейкăсемпе тырă выраççĕ. Кашни кунах вĕсем ĕç нормине 120—125 процент тултараççĕ. Тырра çавасемпе тата çурласемпе выракан колхозниксем хушшинче стахановла ĕçлекенсем нумай. Стахановла ĕçлекенсен ретне халĕ татах 12 колхозница хутшăнчĕç.

Тырă вырнипе пĕрлех кĕлте кӳрес, авăн çапас ĕçсем те хăвăрт пулса пыраççĕ. Павлова, Трофимов юлташсем ертсе пыракан бригадăсем урпа тата тулă вырса пĕтерчĕç, вырса пухнă хыççăнах капана хыврĕç.

Колхоз государствăна ыраш, кĕрхи тулă, урпа, çурхи тулă, пăрçа йышши культурăсем парса татрĕ.

С. СОКОЛОВ.

Кĕракине тухман колхозсем те пур-ха

ШЕНТЕР, августăн 21-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ колхозсене кĕрхи тырăсене ирттерсе акма сĕнет. Анчах Сентер районĕ кĕрхи тырăсене срок тухиччен акса ĕлкĕреймест. Район паянхи куна кĕрхи тырăсем акмалли çĕр лаптăкĕн виççĕмĕш пайне çеç акнă. Ака ĕçĕ çакăн пек юлса пыни кĕракине колхозсем кая юлса тухнинчен килет. Ярославка ялсоветĕнчи «Ударник», «1-ая борозда», «Новое Чемеево» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем кĕракине халĕ те тухман. «Ударник» колхоз—пысăк колхоз. Унăн кĕрхи тырăсем 210 гектар акса хăвармалла. Анчах ку колхоз çĕртме пуссине те иккĕмĕш хут сухаламан. Колхоз председателĕ Арчиков юлташ кĕракине вăхăтра тумалли ĕç тесе шутламасть. Ярославка ялсовет исполкомĕн председателĕ Рубцова юлташ ку тĕлĕшпе тимсĕр ĕçлет.

Çавăн пекех Муркаш ялсоветĕнчи «Авангард», «Знамя труда» тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсем, Шатракасси ялсоветĕнчи «Идея», Шашкар ялсоветĕнчи «Аврора», Ильинка ялсоветĕнчи «Краснофлотец», «Осоавиахим» колхозсем те акма тытăнман. Тата çакă та курăнать: малтанхи кунсенче лайăх ĕçленĕ колхозсемех ĕç хăвăртлăхне чакарчĕç. Çакна пула районри 101 колхозран пĕр колхозĕ те халĕ кĕраки планне 50 процентран мала тултарман.

Хăшпĕр колхозсенче тата ĕç пахалăхĕ япăх. Иртнĕ кунсенче пулнă вăйлă çумăрсем сухаланă çĕре хытарса лартрĕç. Çавăнпа ун пек вырăнсене культиваци тумалла. Анчах Оринино ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз культиваци тумасăрах акать. Çапла вăрлăх çĕре кĕмесĕр юлать. Мĕншĕн тесен пирченсе ларнă çĕре сӳре шăлĕсем кĕмеççĕ. 6 культиватор ахалех ларать.

Районра кĕраки сӳрĕк пынине техех тӳсме çук. Ака ĕçĕн хăвăртлăхне ӳстерес пулать. Мĕншĕн тесен кăçалхи кĕртыррисене вăхăтра акса хăварни çитес çулхи тырпул тухăçлăхне татса парать.

Г. ИВАНОВ.

Сывлăх фончĕ валли

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, августăн 20-мĕшĕ. (Хамăр корр.). «Радио» колхоз «Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен сывлăхне сыхламалли фонд» валли 700 литр, «Труженик» колхоз 500 литр сĕт пачĕç. «Совет», «Путь к социализму» тата ытти колхозсем те тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен сывлăхне сыхлама сĕт-çу параççĕ.

Х. Л.

Хирте ĕçлес вырăнне ухутара çӳреççĕ

ЕЛЧĔК. Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, çуркунне МТС-па ĕç договорĕ туса, кăçал тырпулсене пухса кĕртес ĕçре трактор бригади пулăшасса нумай шаннăччĕ. Комбайнпа вырма колхоз правленийĕ 35 гектар ыраш, 30 гектар сĕлĕ уйăрса хăварнăччĕ. Колхозниксем комбайн килессе нумаййчен кĕтрĕç, анчах кĕтсе илеймерĕç, тырра тăкăниччен çурласемпе вырса пуçтармалла пулчĕ. Комбайн хире тухмарĕ.

Колхозăн ĕç планĕ тăрăх, тырă вырма тухсан 5-мĕш кунĕнче МТС-ăн сложнăй молотилкипе авăн çапма пуçламаллаччĕ. Анчах ку та пулмарĕ. Сложнăй молотилка, МТС руководителĕсен тăрлавсăр ĕçне пула, халĕ те çуркуннехи пекех çĕмрĕк ларать. Колхозниксем авăна хăйсен молотилкипе тата тăпачăпа çапаççĕ.

Анчах мĕншĕн-ха МТС хăйĕн ĕç договорне пурнăçламасть? Мĕншĕн трактор бригадин бригадирĕ Семен Карлин тата унăн помощникĕ Андрей Убасев юлташсем ĕçре пулас чухне тăтăшах ухутара çӳреççĕ? МТС дирекцийĕн Ленин ячĕпе тăракан колхозри хăйĕн бригадипе халех интересленмелле.

Н. ВИССАРИОНОВ,
Аслă Елчĕк ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Григорьев çемьи мĕншĕн колхозра ĕçлемест?

КУСЛАВККА. Паланкассинчи «Коминтерн» колхозра ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем çукпа пĕрех. Алексей Григорьев çемьи кăна 1941 çултанпа та пĕр ĕçкунĕ те туман. Григорьев хăй колхоза кĕрсенех ялтан тухса кайнă, арăмĕ вара килтех пурăнать, анчах ĕçе тухмасть. Çакăншăн ăна суд аллине те панăччĕ. Анчах Куславкка районĕн халăх судьи Андреев юлташ ăна колхозра ĕçлессинчен пăрăнма татах май панă.

Правлени председателĕ И. Матвеев колхоза лайăх ертсе пынипе пула, юлашки çулсенче колхоз чылаях тĕреклечĕ. Кăçал уйри тырпул вăйлă ӳсрĕ. Ĕçкунĕсем çине тырă ытларах лекессине туйса, колхозниксем ырми-канми ĕçлеççĕ. Колхоз правленийĕ колхозниксем тухăçлă ĕçлечĕр тесе çураки пуçлансанах столовăй уçнă, ясли тунă. Анчах Григорьевăна ку условисем те çитмеççĕ. Вăл, чирлĕ тесе, кашни кунах Куславккана 18 çухрăма кайса спекуляци тăвать.

Хăйшĕн çеç çунакан тата услам тăвасси çинчен, ĕçрен пăрăнасси çинчен шухăшлакан çынсене тивĕçлипе айăпламалла.

М. ИЛЬИН.

Пĕр колхозри комсомолецсем

ЕТЕРНЕ. Комсомолăн Алексеевкăри «Хĕрлĕ Çăлтăр» колхозри пуçламĕш организацийĕ, хальхи обстановкăн условийĕсене тĕплĕн ăнланса илсе, пĕтĕм ĕçе вăрçă интересĕсемшĕн туса пыма тăрăшать.

Комсомолецсем колхозра ответлă ĕçсене ертсе пыраççĕ. Комсомолец Н. Яковлев—колхоз председателĕ. Ăна пĕр çур çул каялла колхоз председательне суйланă. Унччен кая юлса пынă колхоз халĕ районра малта пыракан колхозсен ретне тăчĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, çулйĕр ĕçĕсене туса пырас, выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçсенче çитĕнӳсем тунăшăн çак кунсенче Яковлев юлташа ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ 1000 тенкĕ укçа парса премилерĕç. Ку ĕçсене тума колхозри ытти комсомолецсем те пулăшнă.

ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ Сорокин юлташ бригадир пулса ĕçлет. Вăл ертсе пыракан бригада яланах ĕçре малта пырать. Ферма заведующийĕ комсомолка М. Орлова тăрăшса ĕçленипе 1943 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те ытлашшипех тултарнă. Комсомолецсем пуçарса пынипе колхозра выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе анлăн саралса пырать, кăçал планпа пăхнинчен 20 тонна ытла силос хывса хăварнă.

Халĕ комсомолецсем хăйсен пархатарлă ĕçĕсене уборкăра кăтартаççĕ. Н. Сынков, М. Васильева, В. Гаврилов комсомолецсем звеноводсем пулса ĕçлеççĕ, кулленхи ĕç нормине яланах ирттерсе тултарса пыраççĕ, колхозниксене те хăйсем пек хастарлă ĕçлеме чĕнеççĕ. Кăçал 7-мĕш класран вĕренсе тухнă комсомолец А. Алексеев тырă вырнă çĕрте нормăна 200 процентран кая тултарман.

Комсомол организацийĕ, союзра тăман çамрăксене час-часах комсомол пухăвĕсене чĕнсе, вĕсене кулленхи ĕçе явăçтарса вĕрентсе пырать. Колхоз производствин ĕçĕсем çинчен сӳтсе-явса, конкретнăй решенисем йышăнать.

Организацири кашни комсомолец—колхозри агитатор. Уйрăмăнах А. Краснов, Н. Сынков, А. Яковлев, В. Яковлев, Н. Артемьев комсомолецсен паха ĕçĕсене палăртмалла. Вĕсем тăтăшах колхозниксене партипе правительствăн постановленийĕсене, Совет Информаци бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа ăнлантарса параççĕ, каласусем ирттереççĕ, культмассăллă ĕçе туса пыраççĕ. Çак кунсенче комсомолецсем колхозниксене «Кушар» пьесăна лартса пачĕç. Колхозра стена хаçачĕсем, бригадăсенче боевой листоксем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ. Кунсăр пуçне, ударниксене палăртса пыма хисеп хăми тунă.

Колхозниксене Сталин юлташăн приказне ăнлантарса панă хыççăн уборка ĕçĕсем уйрăмăнах пысăк хăвăртлăхпа пулса пыма пуçларĕç. 60 çула çитнĕ Василий Красновăн аслă ывăлĕ Сталинграда хӳтĕленĕ çĕрте паттăррăн çапăçса пуçне хунă. Тепĕр ывăлĕ халĕ фронтра çапăçать. Икĕ фронтовикăн ашшĕ, ватă пулин те, кунсерен 0,30 гектар вырса, ĕç нормине 300 процент таран тултарса пырать. Кун пек чĕререн тăрăшса ĕçлекен колхозниксем сахал мар. Бригадирсен табелĕсем çинче нормăна тултарман колхозниксене тупма çук. Çапла ĕçлесе, колхоз кĕрхи тырăсене планпа пăхнинчен пĕр кун малтан вырса пĕтерчĕ.

Алексеевкăри комсомолецсем хăйсен ĕçĕсемпе тĕрĕссипех мухтанма пултараççĕ. Çавăнпа, колхозниксем умĕнче вĕсем мухтава тухрĕç те ĕнтĕ. Колхозниксем вĕсене хисеплеççĕ, ĕçре шанаççĕ.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛЬЯНЕЦСЕН ИКĔ УТРАВĔ ПАРАННА

ЛОНДОН, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн тинĕс-çар вăйĕсем атакăланă хыççăн Италин Липари тата Стромболи утравĕсем союзниксене паранна. (Ку утравсем Липари утравĕсен ушкăнне кĕреççĕ, вĕсем Сицилирен çурçĕреллерехре, Тирренски тинĕсре).

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, акăлчансен «Москито» йышши самолечĕсем Берлин çине бомбăсем пăрахнă.

Союзниксен авиацийĕн ытти соединенийĕсем нимĕçсен Францири тата Голландири аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Летчиксем пĕлтернĕ тăрăх, тапăнусем ăнăçлăн пулса иртнĕ. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 34 самолетне персе ӳкернĕ.

ГИТЛЕРЛА ХАÇАТ НИМĔÇСЕНЕ «ÇУХАЛСА АН КАЙАР» ТЕСЕ ЧĔНЕТ

СТОКГОЛЬМ, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Штрасбургер нейесте нахрихтен» ятлă гитлерла хаçат статья пичетлесе кăларнă. Унта вăл çапла çырать: «Çакна тунма çук: вăрçăра юлашки уйăхсем хушшинче пирĕн пурнăçа пĕрех те çăмăллатман улшăнусем пулчĕç... Ĕçсем хум пек улшăнса пыраççĕ, пĕр енĕ хум çине хăпарса каять, тепĕр енĕ аяла анса каять. Пирĕншĕн халь эпир аялта тăнă вăхăт килсе çитрĕ».

Германире,—тесе çырать çав хаçат,—«хăйсене хăйсем тыткалама пултарайман çынсем тĕл пула пуçларĕç, вĕсем ĕçсем ăнăçман пирки темле виçерен те тухса каяççĕ». Автор каланă тăрăх, çакă вăл тĕрлĕ суя хыпарсем сарнинче палăрать.

ХЭЛЛ КВЕБЕКА ПЫНА

ЛОНДОН, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ Хэлл Квебека пынă.

ПАРИЖМАН ФРАНЦИРЕ

ЛОНДОН, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлеровецсем Виши «правительствине» ультиматум панă, вĕсем Германие август уйăхĕ пĕтиччен 40 пин тонна çĕнĕ çĕрулми яма хушнă. Парижри тата ытти хуласенчи халăхăн пахча çимĕçсем пĕрре те çук. Пĕлтĕрхи выçă çулталăкпа тапăнтарсан, Францири граждансен халăха халь продовольстви икĕ хут сахалтарах параççĕ. Продовольстви массăллăн тыта-тыта илнине пула француз хресченĕсем çĕнĕ тырра капана хывас тата ăна çапас ĕçсене саботаж тăваççĕ. Хресченсем молотилкăсене çĕмĕреççĕ е сирпĕнтерсе яраççĕ, чĕнĕсене пытараççĕ, тырă склачĕсене çунтара-çунтара яраççĕ.

Германие хирĕçле саботаж тата сăтăрла ĕçсем промышленноçпа транспортра та чылай саралнă. Кăçалхи мартран пуçласа июнь уйăхне çитиччен француз патриочĕсем çавăн пек ĕçсем 200 хут ытла тунă.

Нумаях пулмасть гестапо Парижра финанс «министерствинче» тата сулйĕрпе промышленность производстви статс-секретариатĕнче ĕçлекен 15 аслă служащие арестленĕ, вĕсене «государствăна хирĕç каварлашнă» тесе айăпласçĕ.

ГЕРМАНИЯ ШВЕЦИ УРЛА ÇАПЛАХ ÇАР ХАТĔРĔСЕМ ТУРТТАРАТЬ

СТОКГОЛЬМ, августăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Свенска дагбладет» ятлă хаçат Вамбергран янă çырăва пичетленĕ. Çав çырура çапла каланă: «Швецин хĕвеланăç çыранĕнчи чугун çул тăрăх пурăнакан çынсем çакна асăрханă: нимĕçсен çар материалĕсене тиенĕ поездсем Швеци чугун çулĕсем тăрăх халĕ те çӳреççĕ, вĕсем çурçĕрелле тата кăнтăралла каяççĕ. Германин çар материалĕсене Швеци урлă ăретессине августăн 15-мĕшĕнче чармалла пулнă. Августăн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Норвеги енелле товарнăй поезд кайрĕ, çав поезд çинче танксемпе тупăсем те пурччĕ».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РСФСР НАРКОМПРОСĔН ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ПЕДАГОГИКА ИНСТИТУЧĔПЕ УЧИТЕЛЬСЕН ИНСТИТУЧĔ I-мĕш старши курссене тата заочно вĕренме студентсем илесси çинчен пĕлтереççĕ. Çак факультетсене илеççĕ: 1) истори, 2) чĕлхепе литература (çак специальноçсемпе: а) вырăс чĕлхипе литература, б) чăваш тата вырăс чĕлхисемпе литература), 3) физикăпа математика, 4) естествознанипе хими (çак специальноçсемпе: педагогика институтĕнче—естествознанипе хими, учительсен институтĕнче—естествознанипе географи).

Педагогика институтĕнче 4 çул вĕренмелле, учительсен институтĕнче—2 çул. Вĕренме кĕмелли условисем ытти аслă шкулсенчи пекех. Учительсен институтне вăтам шкулăн 9-мĕш класне вĕренсе пĕтернисенчен сахал пĕлекеннисене илмеççĕ.

Заявленисене августăн 31-мĕшĕччен илеççĕ, вĕренме кĕмелли экзаменсем сентябрĕн 20—25-мĕшĕсенче пулаççĕ, экзаменсăр илекенсене студентсен шутне сентябрĕн 1—5-мĕшĕсенче кĕртеççĕ, ыттисене сентбрĕн 25—29-мĕшĕсенче. Заочнăй йĕркепе вĕренес текенсене экзаменсăрах илеççĕ, унта вĕренес текенсен заявленийĕсене сентябрĕн 1-мĕшĕччен илеççĕ. Заочнăй йĕркепе вĕренме çĕнĕрен илнисем валли сентябрĕн 1—10-мĕшĕсенче кăтартусем памалли сесси пулса иртет. Институтра вĕренӳ октябрĕн 1-мĕшĕнче пуçланать.

Институтăн пур студентсем валли те общежити пур. Çăкăр тата ытти продуктсене те рабочисемпе тан параççĕ. Институтăн хăйĕн хупă столовăй, подсобнăй хуçалăх пур. Института çĕнĕрен илнĕ студентсене, СССР Совнаркомĕн 1943 çулхи апрелĕн 22-мĕшĕнчи постановленийĕ тăрăх, вĕренӳ пуçланиччен 10 кун маларах ĕçрен хăтараççĕ, испытани тытакансене экзаменсем пуçланиччен 10 кун маларах отпуск параççĕ.

Вĕренме кĕмелли çинчен тĕплĕ справкăсем çыру ярса е хăйсем пырса институтра илме пултараççĕ. Унтах экзаменсен программи çинчен профессорсемпе преподавательсем консультаци параççĕ. Консультацие çыру ярса почтăпа ыйтса илме те юрать. Вĕренме кĕмелли условисем çинчен калакан справочниксем районсемпе вăтам шкулсенче пур.

Вĕренме кĕрес тесе панă заявленире факультет ятне тата мĕнле специальноçа суйласа илнине кăтартмалла. Заявленипе пĕрле çак документсене памалла: автобиографи, вăтам шкултан вĕренсе тухни çинчен калакан аттестат (е вăтам шкулăн 9 класне пĕтерни çинчен калакан справка), виçĕ фотокарточка, çар обязанноçĕ тĕлĕшĕнчен мĕнле тăнине пĕлтерекен справка.

Института заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Мариинский-Посад Чувашской АССР, директору Педагогического института.
2—1.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 16-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

ЛЕРМОНТОВ

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

ПРИНЦ И НИЩИЙ

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

Шупашкарти кинотеатрта

августăн 14-мĕшĕнчен пуçласа кашни ытларикун, кĕçнерникун, шăматкун тата вырсарникун сеанссем пуçланас умĕн фойере çар чаçĕн духовой оркестрĕ калать.

Пуçламăшĕ 19 сехет те 15 минутăра тата 21 сехет те 15 минутăра.

ЧĂВАШ АССР НАРКОМПРОСĔ

чĕлхесĕр ачасен Куснарти тата Чашламари шкулĕсен, çавăн пекех тата суккăр ачасен Чуварлейри туллимар вăтам шкулĕн подготовительнăй тата ытти класĕсене те вĕренекенсем илесси çинчен пĕлтерет.

Ку шкулсене 8 çул тултарнă ачасене е унтан аслисене те илеççĕ. Ку шкулсене вĕренме кĕнĕ ачасене укçасăрах тăрантарса усраççĕ, тумтирсем те укçасăрах параççĕ, çавăн пекех вăл шкулсен общежитийĕсенче те укçасăрах усраççĕ.

Ачасене ĕçе вĕрентме ку шкулсенче пуринче те мастерскойсем пур.

Заявленисене август уйăхĕн 25-мĕшĕччен илеççĕ. Заявленипе пĕрле документсем ямалла: хăçан çурални çинчен калакан свидетельство, сывлăх çинчен врач панă справка, старши классене кĕрес текенсен тата ку таранччен вĕренни çинчен калакан справкăна памалла.

Шкулсен адресĕ çапла:
1. Козловка, Чувашской АССР, дер. Чешлама, директору школы глухонемых детей.
2. Козловка, Чувашской АССР, дер. Байгулово, директору школы глухонемых детей.
3. Гор. Алатырь, Чувашской АССР, Чуварлейский бор, директору неполной средней школы слепых детей.

Чăваш АССР Наркомпросĕ.

Шупашкарăн Атăл лешьенчи электростанцийĕнче яланлăха ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: Теплосиловой цех пуçлăхĕ, электричество цехĕн пуçлăхĕ, топливăпа транспорт цехĕн пуçлăхĕ, инженер-теплотехниксем, инженер-электриксем, дежурнăй электротехниксем, электромонтерсем, пăс турбинисен машинисчĕсем, конденсаци тĕлĕшпе ĕçлекен машинистсем, компрессорпа ĕçлекен машинистсем, насоссемпе ĕçлекен машинистсем, кочегарсем, шыв пăхакансем, тĕтĕм çăтакан трубасене пăхакансем, кĕл тасатакансем, мотористсем, скреперщиксем, грузчиксем, çав çӳлте асăннă специальноçсене ĕçре вĕренес текен арçын е хĕрарăм рабочисем.

Ĕçе кĕрекенсем валли хваттерсем пур, çимелли параççĕ тата пурнăçра кирлĕ ытти енсемпе те пулăшу параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, поселок Сосновка, отдел кадров электростанции.
3—1.

ЧĂВАШСЕЛЬХОЗСНАБА çак работниксем васкавлăн кирлĕ: запас чăсĕсемпе ялхуçалăх машинисен отделĕн начальникĕ, металпа мотиз отделĕн начальникĕ, яд химикачĕсемпе минераллă удобренисен отделĕн начальникĕ, главнăй бухгалтер, статистик.

Ĕç укçи калаçса татăлнă тăрăх.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Калинин урамĕ, 34. Телефон 0—94.
2—1

Сельхозснаб çумĕнче çĕнĕрен уçăлакан СЕЛЬХОЗПРОМСНАБ конторине çак ĕçсене ĕçлекенсем кирлĕ: главнăй бухгалтер, счетовод-кассир, сăмала юхтарма, тикĕт тата урапа маçĕ хатĕрлеме пĕлекен специалист, ут тавраше, урапа-çуна тума пĕлекен специалист.

Ĕç укçи калаçса татăлнă тăрăх.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули. Калинин урамĕ, 34. Телефон 0—94.
2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Н.К 1809 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.